Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

*83-84 (7614-7615) №№* ✻ *Шăмат кун, 2008 ҫулхи ноябрĕн (юпа) 1-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

## Ноябрĕн 4-мĕшĕ – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ



### Халăх пĕрлĕхĕн кунне халалласа

Уяв ячĕпе районти мероприятисен планне хатĕрленĕ. Унпа килĕшӳллĕн районти шкулсенче «Пĕр ҫемьери пек пурăнатпăр» темăпа класс сехечĕсем иртеҫҫĕ. Районти вĕрентӳ пайĕ вĕренекенсем хушшинче «Эп – Раҫҫей гражданинĕ» ятлă социаллă проектсен конкурсне ирттерет. Унсăр пуҫне вĕренекенсем хушшинче «Пĕрлĕхре – пирĕн вăй» ятпа пултарулăх ĕҫĕсен конкурсĕ те пырать. Районти шкулсемпе библиотекăсенче «Чăваш Ене ĕненсе, Раҫҫее юратса» темăпа литературăпа музыка композицийĕсене йĕркелеҫҫĕ. Ҫак кунсенче районти библиотекăсенче хатĕрленĕ «Пĕрлĕхре – вăй» куравсемпе те паллашма пултаратăр. Тĕслĕхлĕ библиотекăсенче ноябрĕн 4-мĕшĕнче «Эпир туслăхпа пуян» темăпа ҫавра сĕтел хушшинче калаҫу иртет. Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи библиотекăра ноябрĕн 7-мĕшĕнче «Толерантлăх тата эпир пурăнакан тĕнче» ятпа шкулта вĕренекенсемпе ҫавра сĕтел хушшинчи калаҫу йĕркелеҫҫĕ. Муркашри ачасен искусство шкулĕнче халăх пĕрлĕхĕн кунĕнче тĕнчери халăхсен ташшисен фестивалĕ пулать.

**Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи Культура ҫуртĕнче ноябрĕн 4-мĕшĕнче Халăх пĕрлĕхĕн кунне халалласа хаваслă пуху иртет. Ăна район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов уҫать. Вячеслав Христофоров хăйĕн ушкăнĕпе район ҫыннисене ҫĕнĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**
**МУРКАШ РАЙОНĔН ҪЫННИСЕМ!**

Сире пурне те ҫывхарса килекен Раҫҫейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Ҫак уяв пире тĕрлĕ наци ҫыннисен килĕшӳлĕхĕпе халăх пĕрлĕхĕ мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине кăтартса парать.

Чăвашсен ҫакăн пек каларăш пур: «Пĕччен суран – типсе пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать». Пĕрле чухне ҫеҫ йывăрлăха ҫĕнтерме, умри тĕллевсене пурнăҫлама пулать. Тĕслĕх шырама инҫе каймалла мар: пĕрле ҫине тăрса ĕҫленипе районăмăр республикăра малтисен шутĕнче пырать, Республика кунне те чыслăн хатĕрленсе ирттертĕмĕр, ҫулсем тăвассипе те нумай ĕҫлерĕмĕр, тухăҫлă тыр-пул ҫитĕнтерсе илтĕмĕр тата ытти те.

Эпир малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнсан, пĕр тĕллевлĕн, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хурсан ҫĕр-шывăмăр, районăмăр татах та вăйлăрах, тĕреклĕрех пулĕ. Пурнăҫламалли вара пирĕн паян та сахал мар. Ялсем патне ҫул тăвассине вĕҫлемелле, ҫитес ҫултан пуҫласа ăна ялсем хушшинче сарма пуҫламалла, районта пурăнакансене таса шывпа тивĕҫтермелле, ял хуҫалăхне йывăрлăхран кăлармалла, тăван Муркаш Енĕмĕре татах та илемлĕрех тумалла тата ытти нумай ыйтăва татса памалла. Ăнланулăх, пĕрлĕх малти вырăнта пулмалла пирĕн.

Малалла та пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасчĕ, пĕр-пĕрне хисеплесчĕ, ăнланасчĕ, пĕр тĕллевлĕн ĕҫлесчĕ. Вара ĕмĕтĕмĕрсем те ҫитсе пырĕҫ, шухăшлани те пурнăҫланĕ. Пурне те ҫирĕп сывлăх, килĕшӳ, ăнлану, телей, юрату, вăрăм кун-ҫул сунатăп.

**Район пуҫлăхĕ Ю. А. ИВАНОВ.**

### Ирĕклĕхе пĕрле сыхласа хăварнă

2005 ҫултан тытăнса Раҫҫей Федерацийĕнче ноябрĕн 4-мĕшĕнче Халăх пĕрлĕхĕн кунне паллă тăваҫҫĕ.

Ҫак кун пирĕн ҫĕр-шыв историйĕнче уйрăммăн шутланса тăрать. 1612 ҫулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче (ҫĕнĕ стильпе) халăх ополченийĕн ҫар ҫыннисем Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский ертсе пынипе штурмпа Китай-хулана ҫĕнсе илнĕ, Мускава Польша интервенчĕсенчен ирĕке кăларнă.

Унччен Раҫҫейре пăтрашăнчăк тапхăр пулнă. Халсăрланнă Раҫҫей пурнăҫне куҫ хывас текенсем сахал пулман. Ку интервенци, унччен уҫҫăн палăрман пулсан та, вăхăт иртнĕ май уҫҫăнрах та уҫҫăнрах палăрма тытăннă. Поляксен, шведсен интервенцийĕсем. Вырăс престолĕ ҫине Польша патшин Сигизмундăн ывăлне Владислава лартни вара наци интересĕсене сутниех пулнă. Ҫавăн чухне ҫĕр-шыв умĕнче ирĕклĕхе ҫухатассин ыйтăвĕ тăнă. Анчах та халăха чуралăхран ҫăлса хăварма, ҫĕр-шыв ирĕклĕхне сыхласа хăварма тивĕҫлĕ вăй тупăннă. 1611 ҫулхи март уйăхĕнче Рязань ҫĕрĕ ҫинче пĕрремĕш халăх ополченине йĕркеленĕ, ҫав ҫулхи кĕркунне – иккĕмĕшне, Чул хулара.

Мускава ирĕке кăларни ҫĕр-шывра патшалăх влаҫне кирлĕ пек йĕркелеме май панă. 1613 ҫулхи январь уйăхĕнче тĕп хулара Земство соборĕ пухăннă. Тинех вара пăтрашăнчăк вăхăт вĕҫленнĕ, патшалăх структурине йĕркелес ĕҫсем тытăннă.

Хусан Турăшĕ вырăс ҫарĕсем Кузьма Мининпа Дмитрий Пожарский князь ертсе пынипе Кремле тата Мускава тăшманран ирĕке кăларнă чухне те ополченире пулнă. Ҫавна халалласа Хĕрлĕ площадьре Хусан соборне ҫĕкленĕ.

Историре пулса иртнĕ ҫак пулăмсене шута илсе ҫулленех ноябрĕн 4-мĕшĕнче Халăх пĕрлĕхĕн кунне уявлаҫҫĕ. «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ район ҫыннисене Раҫҫейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлать, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăҫу сунать.

## Республикăра

### Ҫăмăллăхсем вырăнне – укҫа

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ октябрĕн 22-мĕшĕнче иртнĕ ларура Чăваш Республикин «Реабилитациленисене тата политика репрессийĕсенче инкек тӳснисен социаллă хӳтлĕхĕ ҫинчен» тата «Вăрҫă ҫулĕсенчи тыл ĕҫченĕсен, ĕҫ ветеранĕсен тата Чăваш Республикин ĕҫ ветеранĕсен социаллă хӳтлĕхĕ ҫинчен» калакан саккунсене улшăнусем кĕртессине пăхса тухнă. Ку вăл 2007 ҫулхи февралĕн 23-мĕшĕнче Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕ ĕҫ тăвакан влаҫăн федераллă органĕсене тата Раҫҫей Федераци субъекчĕсен патшалăх влаҫĕсене 2008 ҫул вĕҫлениччен социаллă хӳтлĕхпе тивĕҫтерессине укҫан памалли ҫине куҫма хушнипе ҫыхăннă.

Ҫапла вара 2009 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ҫӳлерех асăннă категорисене кĕрекен ҫынсене пур ҫăмăллăхсене те укҫан пама тытăнаҫҫĕ. Уйăхсерен тӳлекен укҫа ҫитес ҫул тĕлне ĕҫ ветеранĕсемпе Чăваш Республикин ĕҫ ветеранĕсен 710 тенкĕпе танлашĕ, тыл ĕҫченĕсен – 700 тенкĕпе. Реабилитациленисем алла 1775 тенкĕ, политика репрессийĕсенче инкек тӳснисем 1530 тенкĕ илме пуҫлĕҫ. Ҫак укҫапа вара кашниех хăйне май усă курма пултарать.

Кунсăр пуҫне ĕҫ ветеранĕсен тата Чăваш Республикин ĕҫ ветеранĕсем валли телефонпа усă курнăшăн тӳлессин 50 % танлашакан компенсацине укҫан парасси сыхланса юлать. Реабилитациленисен вара телефон тӳлевсĕр кĕртме малашне те май пулĕ.

Республика шайĕнче ҫăмăллăхсемпе усă куракансене укҫа тӳлесе тăма республика бюджетĕнче ҫитес 3 ҫул валли 4 миллиарда яхăн укҫа-тенкĕ уйăрнă.

## Ял хуҫалăхĕ

### Мулкачкассисем ҫитес ҫулшăн ĕҫлеҫҫĕ

Ял хуҫалăх экономикин ҫаврăнăшĕ акаран вырмаччен, хура кĕркуннерен мал туртăмлă ҫур акиччен пулса пырать. Самай йывăрлăхсемлĕ ҫак ҫул ҫинче ҫаврăнăҫулли кăна палăртнă тĕллев патне ҫухатусемсĕр ĕҫлесе пырса тухăҫ енчĕкне сарлака уҫайрать. Ку вара ҫĕр ĕҫченне ҫичĕ хут тар юхтарма ыйтать. Малашлăха пăхакан ҫак чĕнĕве пĕр турткаланмасăр йышăнать те ҫанă тавăрса ĕҫе кӳлĕнет. Халĕ калана сăмахсем М. Шишокин ертсе пыракан «Восток» ял хуҫалăх производство кооперативне тӳрремĕнех пырса тивеҫҫĕ.



Мулкачкассисем кăҫал районти пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсенчен пуринчен малтан вырма ĕҫĕсене вĕҫлерĕҫ. Агротехникăпа килĕшӳллĕн кĕрхи культурăсене вăхăтра акса хăварчĕҫ, паян ҫĕртме сухи тăвассипе ĕҫсене вĕҫлесе пыраҫҫĕ. Ҫĕр ĕҫченĕ хăйĕн ял хуҫалăх ҫулне вĕҫлесе пырать. Анчах кăҫал мĕн туни ҫитес ҫулхи ĕҫсене никĕсленине те вăл самантлăха та манмасть. Типĕ илемлĕ кĕр кунĕн кашни сехечĕпе туллин усă курас тесе иртнĕ кунсенче «Восток» хуҫалăхра сӳресем, культиваторсемпе сеялкăсем юсас ĕҫ пуҫланчĕ. Ҫак кунсенче ятарлă ушкăн сӳресем юсаса хатĕрлессипе ĕҫе вĕҫлерĕ те темелле.

– Ăшă кунра сивĕ вăхăтринчен тухăҫлăрах ĕҫлеме пулать тесе вăй хуратпăр. Акă юлашки сӳресене юсав витĕр кăларнă хыҫҫăн сеялкăсене мастерскойне кĕртĕпĕр, – калаҫать сӳре шăлĕсене шакканă май вырмара хуҫалăхри чи вата «хир карапĕпе» ĕҫленĕ Валериян Димитриев комбайнер. Унăн ĕҫри тусĕ Вячеслав Андреев та **(сăн ӳкерчĕкре сулахайра)** вырмара тепĕр экипажра комбайнера пулăшаканĕ пулса вăй хунă.

Маттур комбайнерсем паян хăйсем ĕҫленĕ техникăна управа лартнă май кăкарса ĕҫлемелли техникăна юсас ĕҫе кӳлĕннине ырламалла кăна.

Хирте вара инҫетренех висĕ трактор ҫĕртме сухи туса пĕтерессипе тимлени курăнать.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Район администрацийĕ ҫумĕнчи профилактика канашĕн ларăвĕнчен

# Курмăш-илтмĕш пулас марччĕ...

Калаҫу пуҫламăшĕнче ҫак цифрăсене илсе кăтартас килет. Кăҫалхи 9 уйăхра районта пĕтĕмпе 387 преступлени тунă. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 13,6 процент чухлĕ сахалрах. Пĕр енчен, лайăх. Анчах лăпланма та сăлтав ҫук. Ытларах чух эпир милицинче ĕҫлекенсем йĕрке тăвасса кĕтетпĕр вĕт. Хамăр ытлашшиех хуша-хуппа кĕресшĕн мар. Мĕн тăваҫҫĕ, тĕслĕхрен, районти обществăлла организацисемпе депутатсен корпусĕ ял тăрăхĕсен территорийĕсенче йĕркелĕх пултăр тесе? Мĕнле профилактика ĕҫĕсем ирттереҫҫĕ? Шăпах ҫак ыйтăва пăхса тухрĕҫ те ĕнтĕ ҫак эрнере иртнĕ район администрацийĕ ҫумĕнчи профилактика канашĕн ларăвĕнче.

Ҫакна валли сăлтавĕ те пур. Районти шалти ĕҫсен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, чи нумай преступлени Муркаш (66), Москакасси (52), Мăн Сĕнтĕр (46) ял тăрăхĕсенче пулнă. Ĕҫлеҫҫĕ-и халăх дружинникĕсем ял тăрăхĕсенче? Муркаш ял тăрăхĕн пуҫлăхĕ Н.И. Никитин каланă тăрăх, вĕсем каҫхине дежурствăна тухасшăнах мар. Районĕпе вара йĕркене пăснă 41 тĕслĕхе шăпах халăх дружинисен членĕсем тăрăшнипе тупса палăртнă. Апла пулсан обществăлла организацисем тăрăшнин усси пурах.

Е тата йĕркене пăснă ҫынсем ҫумне депутатсене ҫирĕплетнине илер. Ку та йăлана кĕнĕ районта. Е ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсем милици ĕҫченĕсемпе ăнăҫсăр ҫемьесене ҫитнине илер. Усси пур вĕсенчен те. Намăс тени пирĕн чăваш ялĕсенчен хальлĕхе тухса кайсах пĕтнĕн туйăнмасть. Ют ҫын калани, ют ҫын сăмахĕ чĕрери хăш-пĕр хĕлĕх патне пырса тиветех.

Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов каланă тăрăх, больницăна час-часах упăшкисем хĕнесе пĕтернĕ хĕрарăмсене илсе килеҫҫĕ. Чăваш хĕрарăмĕсем чăтма хăнăхни-ши ку? Апла-и, каплаи – ҫемьесемпе ĕҫлессине вăйлатмалли ҫинчен калать ҫакă. Ялта пĕр ҫемьере чашăк-тирĕк шакăртатни кӳршеарша илтĕнетех, курăнатех. Пĕри, тепри курмăш-пĕлмĕш пулни пысăк инкек патне илсе ҫитерме пултарать. Кун пек тĕслĕхсем районта пулман мар.

–Ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен те, участоксенчи милицин уполномоченнăйĕсен те часчасах ҫемьесенче пулмалла, – палăртрĕ район пуҫлăхĕ Ю.А. Иванов ларура.

Ларура Муркаш, Ҫатракасси, Чуманкасси, ҫавăн пекех Ярославка ял тăрăхĕсенче ҫӳлерех асăннă ыйтусемпе мĕнле ĕҫленине пăхса тухрĕҫ. Вĕсен пуҫлăхĕсен сăмахĕсенчен те обществăлла организацисен пĕлтерĕшĕ пурри палăрать. Апла пулсан ку енĕпе ĕҫе вăйлатмалла. Хальлĕхе вара ял тăрăхĕсенчи профилактика канашĕсемпе ҫемьесемпе ĕҫлекен комиссисем ҫителĕклех ĕҫлеменни курăнать.

Ларура калаҫу ҫамрăксем ҫĕрле вăрăмлатнă вăхăтпа ĕҫлекен уйрăм ҫынсен магазинĕсен умĕнче пуҫтарăнни патне те ҫитрĕ. Кунта магазинсен ĕҫ вăхăтне пăхса тухмаллине палăртрĕҫ. Малтанхи пекех каҫхи 10 сехетчен ĕҫлесен те, эрех-сăрана вăл вăхăтчен сутассине чикĕлемеллине палăртрĕҫ.

Халăх дружинникĕсен йышне ҫĕнĕрен пăхса тухса ҫирĕплетмелле. Депутатсен корпусĕпе обществăлла организацисен витĕмне ӳстермелле. Ҫакăн пек йышăнса хăварчĕҫ ларура. Ҫавăн пекех вĕсен ĕҫне район хаҫатĕнче те ҫутатсах тăмалла.

Каласа хăвармалла, хальхинче профилактика комиссийĕ хăйĕн ларăвне район пуҫлăхĕ ҫумĕнчи ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен канашĕн ларăвĕпе пĕрле ирттерчĕ. Район администрацийĕн пуҫлăхĕн ҫумĕ В.Г. Никитин унта халăха шывпа тивĕҫтерес ыйту ҫинче чарăнчĕ. 131-мĕш федераллă саккунпа килĕшӳллĕн ҫав объектсем ял тăрăхĕсем ҫинче пулмалла. Ҫавăнпа та ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсен вĕсене йышăнассипе, хуҫалăхе предприяти ертӳҫисен шыв башнисене ял тăрăхĕсем ҫине куҫарас ыйтăва хăвăртлатмалла.

Палăртмалла, паян ял тăрăхĕсенче ял тăрăхĕсен генеральнăй планĕсене хатĕрлесе ҫитерессипе те ĕҫлеҫҫĕ. Владимир Германович ку ыйтупа та уйрăмах мĕн ҫине тимлĕх уйăрмалли ҫинче чарăнчĕ.

**Л.ПАВЛОВА.**

## Ҫырăнтару – 2009

**Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2009 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫулта илсе тăма ҫырăнтараҫҫĕ. Ултă уйăха ҫырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.**

**Хаклă вулаканăм, район хыпарҫисĕр ан юлăр. Ҫитес ҫул та пĕрле пулар!**

**Райхаҫат редакцийĕ.**